26-69

КУРАК

# СĂВĂСЕМ

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ С С С Р.

КУРАК

# СТИХИ

НА ЧУВАШСКОМ ЯЗ.

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ СССР

МОСКВА, Никольская, 10

Пĕтĕм тĕнҫери пролеттарисем, пĕрлешĕр!

## КУРАК

# СĂВĂСЕМ

ЦЕНТРАЛЬНОЕ ИЗДАТЕЛЬСТВО НАРОДОВ С.С.С.Р.
МОСКВА—1926.

Книга набрана и отпечатана на книжной фабрике Центрального Издательства Народов СССР. Москва, Шлюзовая набер., д., № 162, в количестве 3.000 экземп.
Главлит № 53.526

## Ҫуркунне.

Тинех кӗтсе илтӗмӗр
Хӗл ӗмӗрӗ иртнине—
Уншăн пире пулăшрӗ
Вăрах кӗтнӗ Ҫуркунне.

Хӗвел, ҫўле хăпарса,
Выртан йура шăратрӗ,
Ҫырма тăрăх улатса
Тинӗселле йухтарҫӗ,

Унăн выртан вырăнне
Шăтса тухрӗ йешерсе
Ҫамрăк курăк, ҫеҫексем—
Сулҫи ҫупаҫ ҫеҫкине.

Хӗпӗртесе кăткăсем
Йăвисене пухаҫҫӗ,
Пур ҫӗрте те халăхсем
Сухалаҫҫӗ, акаҫҫӗ.

Вăрмансем те шавлаҫҫӗ,
Сулҫисемпе кашлаҫҫӗ,
Кайăксем те савнаҫҫӗ,
Ҫуркуннешӗн йурлаҫҫӗ

# Йал çинҗе.

Çутӑ çуртра каçхине
Çутса йаҗӗç хӑйӑйине.
Çутта кура Укçине
Ута паҗӗ йал çине.

Ирӗкленнӗ йал çиӗ
Тӗттӗмлене пуçланӑ,
Хура тӗтре йавӑнса
Çулӑн тӗсне хупланӑ.

Çула тӑрӑх, урамра,
Çамрӑк-кӗрӗм ахӑраҭ;
Çӗр çӗмӗрсе, кӑшкӑрса
Аҗа купи купатаҭ.

Укçинене курсассӑн—
Йӗри—тавра сырӑнаҭ;
Çут кӑмӑлне туйсассӑн—
Ӳпкелеме тытӑнаҭ.

Вӗсе хирӗç Укçине
Çапла шухӑш пӗлтерет:
— Тӗттӗмлӗхӗн вӑйӑйине
Ӗмӗрне те кӗмӗп, тет.

— Мӗншӗн тесен, тӗттӗмлӗх
Ултавлӑха пулӑшаҭ;
Çуттӑн ӗçне пӗлмесӗр—
Ӗмӗрсене çухатаҭ.

Ӗмӗрсене шеллесен—
Унпа утар тӗнҗене:
Çуттӑн ӗçне ӗçлесе
Пурӑнӑçа вӗренер.

# Ҫулахи ҫӗр.

Аслă арман пӗвинђе
Уйăх ишет таш.лаcа,
Пулăсенӗн вăййипе
Пӗве тăрăх саланса.

Пӗве тăрăх хурăнсен
Тӗттӗм тăрри шуралнă.
Айне мӗлке хурăнса—
Сатăн ăшӗ хуралнă.

Ђăлтăр-ђăлтăр ђеђексем
Емен куҫран пăхаҫҫӗ,
Пит айакри ҫăлтăр пек,
Пăхсан пăхсан тухаҫҫӗ.

Пур илемлӗх тӗсӗпе
Ҫулахи ҫӗр йусапат̆,
Сарă кайăк—йуррипе—
Пур кăмăла тултарат̆;

Емен шывăн тӗпӗнђе
Шăхлиђӗ пек пăлканат̆,
Йуратувăн сăввипе
Тутлăн-тутлăн калаҫат̆.

Ун йуррине парăнса—
Шапа сасси купланат̆,
Пӗр пӗр автан авăтсан—
Ҫилпе вӗҫнӗн туйăнат̆.

Иртет ӳйăп тăмани—
Тем пулнă пек макăрат̆;
Емен вăрăм ӗмӗршӗн—
Куккук вăрăм авăтат̆.

Вăрăм кайат̆ татăлса,
Шыва тăрăх йапраса,

Йанăрупа савăнса,—
Çĕр те иртет, савăнса.

Уйăх анаҫ сарăлса,
Киреметĕн хыçнелле;
Ӳхĕ ҫĕнет хăлхаран—
Çутăлнине пĕлтерме.

Çутă килет валкăшса,
Тĕттĕм пĕтет йĕркипе;
Халăх ҫупаҫ малалла—
Тав тумашкăн ирĕке.

## Пир çапни.

Çапăн... çапăн! çинçе пир,
Çапăнсассăн çиппе вит:
Пĕр май витсен çаврăпăр,
Тата хытă çапăпăр,
Çапсан-çапсан ҫарнăпăр,
Тытса туртса тăсăпăр,
Туртса тăссан, хутлăпăр,
Хутласассăн,—ҫăркăпăр;
Хĕрлĕ каҫҫă килсессĕн—
Хĕрлĕ хĕре хушăпăр
Йăмăх хĕрле пĕвеме,
Хĕрлĕ кĕпе çĕлеме;
Тăхăнтарса пăхсассăн,—
Пур ҫĕрипе йураттăр,
Пур ҫĕрипе йуратса,
Хĕрлĕ каҫҫа йусаттăр...

# Каçхи çумăр.

Хура пĕлĕт уççинҫен—
Хĕвел анни пĕлĕнет,
Пĕлĕт шуса пынипе—
Çăлтăр, емен, вĕçкелет.

Çырма тăрăх шапасем
Вакăл-вакăл вакlaççĕ,
Йала тăрăх аҫасем
Такмакласа ташлаççĕ.

Тымар-тымар йалкăшса,
Çиçĕм çĕре йусатрĕ,
Сасартăках йал çинҫе
«Шăтăр-шатăр!» шаплатрĕ;

„Пĕлĕт кашти ишĕлҫĕ"—
Шапăр çумăр тăкăнҫĕ,
Такмаклакан аҫасе
Килĕсене ăсатрĕ.

Шав-шав йухса, кĕрлесе,
Шултăранăн çаптараĭ,
Акнă тырă-пулсене
Йухтармалла шăвараĭ.

# Ç ă л.

Киреметĕн кĕтессинҫе
Тваткăл пура курăнаŤ:
Вĕтĕ ҫулсем хушшисенҫен,
Пăл-пăл туса, шыв тухаŤ;
Валак тăрăх шанкăртатса,
Куритене сикс анаŤ,
Куритерен тухса тарса—
Шурлăх айне пытанаŤ.
Шурăмпуçĕ тухсассăнах
Çăл йухăмĕ выҫанаŤ;
Кĕтў хуса кайсассăнах
Ĕçҫен халăх шыв ăсаŤ;
Хир ĕçсене иртекенĕ
Лакăмсене тултараŤ,—
Кăнтăрлаҫҫен ĕçлесессĕн
Утсем кўрсе шăвараŤ,—
Хур кăвакал картан-картан
Куритене кĕрс ўкет,
Пĕр çын пырса хăратсанах—
Çырма тăрăх вĕçĕнет;
Çырма тăрăх хĕрарăмсем
Хура кĕпе ҫўхеççĕ,
Шурă хĕрсем пир-авăрсем
Валашкара кивеççĕ;
Каç пулнă ҫух вата карҫăк
Салма çакса пĕçерет,
Хирти халăх, таврăнсанах,
Валак айне ҫăмăнаŤ.

# Вӑрманта.

Шурӑмпуҫ тухаспа—
Ҫӑлтӑрсем сайралнӑ,
Шурала щурала,
Шыв тӗпне пек аннӑ...
Кӑваккӑн ҫутӑпа
Вӑрман ӑш хыпӑннӑ,
Пур ырӑ шӑршӑпа
Ҕеҕексем сыпӑннӑ.
Сарӑрах тӗслисем
Йешӗле парӑннӑ,
Йӑмӑхрах хӗрлисем—
Пурҫина ҫаврӑннӑ.
Вӗсене йуратса,
Лӗпӗшсем вӗҫс ӳкнӗ,
Варрине путанса—
Ытларах тӗс кӳнӗ.
Темиҫе ҫухрӑма
Йусавлӑх сарӑлнӑ,
Кайӑксем пухӑнса—
Йурӑсе парӑннӑ.
Тӗрлӗрен сӑвӑпа
Вӑрман ӑш йанӑраӗ,
Вӑрманта выртакан
Етемсе вӑратаӗ.
Месерле ҫаврӑнса,
Куҫсене уҫаҫҫӗ;
Ушкӑна пухӑнса,
Ӗҫ кутне утаҫҫӗ.
Ҫӗклене ҫӗклене,
Йӑвӑҫа касаҫҫӗ,
Пуртисен сассисем—
Сӑвӑсем параҫҫӗ.

Пуртӑсем каснипе,
Йӑвӑҫсем ӳкеҫҫӗ;
Тӗрлӗрен йанрусем—
Айакка кайаҫҫӗ.

Йанӑру сӑввипе
Турат та касӑлаҕ,
Купипе купипе
Пӗр ҫӗре хурӑнаҕ.

Сыпӑккӑн-сыпӑккӑн
Пур йӑвӑҫ касӑлаҕ,
Ӑлавӑн—ӑлавӑн
Килсене ӑсанаҕ.

Ак, пӗррӗн-пӗррӗнех,
Пур йӑвӑҫ касӑлаҕ,
Ыраша вырнӑ пек—
Ҫухрӑма уҫӑлаҕ.

Ҫухрӑма уҫӑлсан—
Ӗҫлекен те пуйаҕ,
Ҫулталӑк пурӑнма
Вӑл вутӑ турттараҕ.

Касӑлнӑ вӑрманӗ
Тепӗр хут хӑпараҕ,
Хыррисен вырӑнӗ
Тепӗр хут акӑнаҕ.

# Ы р а ш.

Ех, ыраш, ырашăм,
Йепле-ха ларатăн—
Мĕншĕн ес ылтăнлă
Кўрнекне йаратăн?

Çукçын пек хурланса
Ман çине пăхатăн,
Хăрăм пек хуралса
Тухăçна тăкатăн.

Ўснĕçем саралса,
Кайалла ђакатăн;
Вăхăтсăр çаралса,
Ман пуçа касатăн.

Çилĕсем те вĕрђĕç—
Тайăла пĕлмерĕн,
Пилĕк улт пĕрђĕлĕ
Пуçахна пĕретĕн.

Сан пуçă тăрринђе
Тăрисем вĕшĕхрĕç,
Айала анасђĕ—
Витĕнђĕк тупмарĕç,

Еп сана çитĕнме
Ĕмĕртен кĕтетĕп,
Çулĕпе çулĕпе
Выçлăха кĕретĕп.

Ех, ыраш, ырашăм,
Пулă пек шыв кĕтетĕн:
Çумăр хыт çумасан,—
Хытхура пек типетĕн.

Çумăрсăрах тўсме
ЙурамасŤ-им сана:

Пур ҫӗре ҫӗпетсен—
Ӗмӗрне сывлама?

Ӗҫ халӑх ӗмӗрне
Кӗрешсеирттерет,
Унсӑр вӑл нихӑҫан
Кун ҫути кураймасӗ.

Еп те, ак, пӑхӑп та—
Хӑлхунтан йарса илӗп:
Акроном пулӑп та—
Лайӑхрах еп ӗҫлӗп.

Ђавкапуҫ тусӑпа
Еп сана хађ акӑп,
Аршӑнтан айалтан
Ӳсӗмне кӑларӑп.

Тепӗр ус курмалла—
Утине пуҫтарӑп;
Сана мар, пурӑра
Ҫӗн ҫулпа ӳттарӑп.

Ун ђухне манпала
Выђама пӑрахӑн,
Вунӑ хут ытларах
Тухӑҫна ес парӑн.

Ху патна тухсассӑн
Хам ҫуллӗш хӑпарӑн,
Пӗрер шит пуҫахпа
Ес хирӗҫ тайӑлӑн.

Шӑмӑлӑ алпа мар
Пуҫӑнтан ађашлӑп,
Йун тумлас пек снӑпа
Йӑл кулса кӑтартӑп.

13/XI-24 ҫ.

# Сухаç.

Йăран тăрăх путкаласа
Сухаç суха сухалаҫ,
Тыткăҫсеҫҫен тытса пырса—
Кăнтти-кантти тукалаҫ.
Кив сухапа ула лаша
Пăркаланса сĕтĕрет,
Утсан-утсан пуçа пăрса
Курăк çиме пĕшкĕнет.
Ана сухаç йеррипеле
Тилпекепе турткалаҫ,
Çу пек çемçе ҫĕлхипеле
Хисте-хисте уттараҫ:
— Аҫа, айван, ут! тетĕп.
Лаша вĕт ес, турт тенĕ!
Каланине итле ĕнтĕ!
Ман кăмăла çĕкле ĕнтĕ.
Пысăк хирĕнваррипеле
Пĕр пысăк ĕç тăвăнаҫ,
Курăк пуснă ана çинҫе
Çĕнĕ йăран курăнаҫ.
Вĕçне тухсан, тепĕр майран
„Кăнтти-кантти“ пĕлĕнет,
Тепĕр тĕрлĕ хистӳ сапа
Ана тăрăх илтĕнет:
— Аҫа, айван, ут тенĕ!
Лаша пултăн, турт тетĕп!
Сана ахаҫ тумăп вĕт,
Сан вăйна çухатмăп еп:
— Пĕрер сехет ĕçлесессĕн,
Çитермешкĕн тăварăп,
Ута çисе пĕтерсессĕн,

Ҫăла кайса шăварăп,
Ӗҫнĕ хыҫҫăн сĕлĕ парса
Ђĕрĕне сыпăнтарăп.
— Вара ҫăмăл пулĕ сана
Суха пуҫне туртмашкăн,
Пăруснанăн пăруснанăн—
Ана хĕрне тухмашкăн.
Акнă тырра, пухсан сутса,
Ака илĕп хуларан,
Унтан вара Караҫука
Ђĕнĕп хама йулташа;
Икĕ вăйа пĕрле пухса—
Ҫăмăл пулĕ ĕҫ тума.

Тар йухăнса ҫĕрĕн ĕҫĕ
Малтан мала ĕҫленет;
Пысăк хирĕн варрипеле
Тепĕр йăран иртĕнет,
Вĕҫне тухсан тепĕр майран
Тар йухăнни пĕлĕнет,
Тата хытрах хистӯ сана
Ана тăрăх илтĕнет:

— Аӑа, айван, ут! тетĕп
Туртма пултăн, турт тенĕ!
Туртмашкăн вĕт ҫуралнă,
Хăмăт, йĕвен тăхăннă.

— Пирĕн хыҫран ыттисем те
Ҫĕр хайăрса пыраҫҫĕ—
Пырсан-пырсан тĕнђипелех
Ушкăн пулса ĕҫлĕпĕр,
Пур ĕҫе те пысăк вăйпа
Пĕрлешĕнсе тăвăпăр,
Пур ҫĕре та аванлатса—
Тырă туса пуйăпăр.

Татах сухаç лашипеле
Тăвас ĕçе икĕтет;
Курăк пусса тулнă çĕре
Тата йăран сĕтенет.
Çаврăнсассăн тата хытрах
Тар йухăнни пĕлĕнет,
Тата урăх сывлăшпала
Хистеп сасă илтĕнет:

— Аҫ̆а, айван, ут! тенĕ
Лаша вĕт ес, турт тетĕп!
Но!..
Сехет иртет вĕт ĕнтĕ,
Çиме вăхăт çитет вĕт;
Çак анана хуратсан—
Пĕр йăвăрăм ҫ̌акаҫ̆ ман.

Сапла ĕнтĕ, тăрăшмалла
Пурăнăçа йусатма;
Халĕ йăвăр курăнсан та—
Малти çăмăл пулмалла.

# Аслӑлӑх аҫи.

«Ҫӗр ирттертӗм ӑйхӑсӑр,
Йалан шкулӑм асӑмра;
Кӑвак ҫутӑ курсассӑн—
Ӟупрӑм тухрӑм урама.
Сиввӗн вӑйлӑ ҫил вӗрет,
Ҫултан ҫӳппе вӗҫтерет,
Пӑт-пат ҫумӑр ӳккелет,
Йака ҫула йӗпетет.
Акӑ ҫырма леш йенӟе
Шкулӑм лараҭ сарӑлса,
Сат пахӟинӟи йӑвӑҫсем
Выӟанаҫҫӗ васкаса.
Кӗркуннене тухнипе
Пур ҫулҫи те саралнӑ,
Пӗрмай ҫилсем вӗрнӗрен—
Таҫта таҫта саланнӑ.
Йакуш пиӟӟе хутланса
Вутӑ кӳртет ҫӗклесе;
Мана курсан, ӟарӑнса,
Ӟӗнет селӗп ӟӗлхипе:
— „Мӗн-ха, етем кӗлетки,
Ирех тухрӑн васкаса?
Тӑрантас мӗн ӑйхуна
Ӑшӑ ҫӗртех килӗнте.
— „Епӗ, пиӟӟе, уи пек мар,
Камӑн шухӑш—ҫывӑрма:
Кам вӗрентет—вӑл аттем,
Пур ӑслӑлӑх—ман аппем.

# Кĕркунне.

Хура пĕлĕт хупланипе—
Шурăмпуç та курăнмасть,
Вĕçĕсене курманнипе—
Ир пулнăн та туйăнмасть.

Авăн çапса пĕтиççенех
Çумăр çума тытăнать,
Хăвасенĕн çулçисене
Çапа-çапа антарать.

Пур çĕре те пўрлентерсе,
Тĕрлĕ кăмпа шăтарать.
Ватă, вĕтĕ, хĕпĕртесе,
Вĕсе ççавса кăларать.

Курăк туйĕ, вăйсăрланса,
Турат çине тăрăнать—
Паррăн-паррăн пырса ларса,
Инçе çулшăн хуйхăрать.

Ура тимен сулхăнсенççе
Тĕссĕр ççеççек сарăлать.
Йала тăрăх, урамсенççе,
Аçça вăййи ççарăнать.

Пăрнай çырми çеремĕнççе
Кĕтўç сасси илтĕнет.
Ăна пуçăн йăрансенççе
Çĕр улмийĕ йĕпенет.

Тĕме çинççи шăтăксенççен
Сăвăр тухса шăхăрать.
Исвус çўрен йулташсенĕн
Йытисене ççуптарать.

Сурат ларнă ана çинççе
Шăпши çиме пуçтарать,

Унта-кунта лӗпӗш вилли
Тӗссӗр ҫӗре ҫăпарлаҫ,
Тырăсенӗн ӗҫӗ пӗтни
Ана ҫинҫех курăнаҫ—
Ӗҫ халăхӗ ăшă ҫӗрте
Ҫулталăка савăнаҫ.

4/V-24 ҫ.

## Асатте.

Турашӗл пек сухалӗ,
Пиҫӗ куҫӗ пӗрӗнҫӗк,
Шакăр шăмă тăлпăвӗ,
Куҫан пекех ал-ури.

Патак ҫине тайанса
Аран-аран уткалаҫ,
Пӗр-пӗр ҫынна тӗл пулсан,—
Аҫа пекех калаҫаҫ.

Каҫ пулсанах хăпараҫ
Кмака ҫине, ăшпалла,
Кушак пырса шăлăнсан,—
Кула-кула йăпатаҫ.

Аҫа-пăҫа пухăнсан,
Халлап йарса кăтартаҫ.
Пур ӗҫӗ те ҫавăнта,
Ывăнсассăн,—ăйхăра.

# Хĕллехи ир.

Шурăмпуçпе талпăнса,
Кăвак пĕлĕт уççинђен,
Хĕрлĕн-кĕрен сăнпала,
Хĕвел тĕсĕ курăнђĕ;
Хăйĕн вăрăм шуçăмне
Йал хыçнелле салатса,
Пас пасарнă йăвăççен
Тăррисене çутатрĕ;
Хирĕç ларан касăра
Çӳлĕ шкулăн çамкине
Ытла ђипер сăрпала
Пĕр вăхăта сăрларĕ.
Хĕвел тĕспе выђанса,
Симĕс-кăвак йăлтăркка,
Çăлтăр пекех вĕçĕнсе,
Лăпкăн-лăпкăн тăкăнаť;
Тикĕс çĕре витĕнсе,—
Йăлтăр-йăлтăр тукалаť.
Ирхи хĕвел тĕспеле
Пысăк шкулăн йенелле.
Йантăрав пек уласа,
Ађа-пăђа пухăнаť.
Шкула кĕрсе тухсассăн,
Сумкисене хурсассăн,
Хӳсе кайнă тĕлсенђе,
Тинĕс çинђе ишнĕ пек,
Тĕме çине хăпарса,
„Ђиккĕл—меккĕл“ ыткăнса,
Лупас айне, хӳттелле,
Пĕр купана йăванаť.
Хыçĕсенђен йыт çури

Емен ёмĕр ҫын курми
Хев-хев! туса, ыткăнса,
Пуҫне ҫиксе, выљанса,
Сăкмансенĕн аркинҫен
Ҫите-ҫите сĕтĕрет.
Аҫа-пăҫа ахăрат,
Тата вăйĭа тытăнат,
Тепĕр тĕме тăррине
Ҫупа-ҫупа хăпарат.
Унҫҫенех те пулаймаст:
Шкул умĕнҫе пĕр аҫин
Пĕҫĕккеҫҫĕ аллинҫе
Йавса тытнă ҫан сасси
Выљакансен хăлхине
Пĕр вăхăта пытанат;
Манса кайнă курнăҫран
Уҫҫениксе вăратат.
Аҫа-пăҫа, саланса,
Шкулăн ĕҫне тапранат:
Ҫӳремелли тĕлсенҫи
Хӳсе кайнă кĕртсене
Кĕреҫепе тасатат,
Хăшĕ урлă пилапа
Пĕренепе каскалат,
Тепĕр ушкăн вĕсене
Савăлсемпе ҫуркалат,
Ҫĕклем ҫине тийесе
Сарай ăшне купалат.
Ҫут ҫанталăк лăпланат,
Тĕнҫе куна ҫаврăнат.
Аҫа-пăҫа вĕренет,
Мăнни ĕҫне тирпейлет.

# Ĕмĕр пуçĕ.

Патăр-патăр турашăл
Çинçе сиппе йавăнаŤ,
Ай хай, ырă сарă хĕр
Йурă йурлаŤ, йанратаŤ.
Шăлтăр-шăлтăр йĕрĕлђе
Йĕке çинђе шăхăраŤ,
Çумри кађђи хăлхине
Сăвă кўртет, лап хуплаŤ.
Кађђăн пĕвĕ çитĕннĕ,
Çулĕ ларнă çеçкепе,
Сăнĕ-тĕсĕ сăрланнă,
Пур илеме пуçтарнă.
Çўçĕ йака туранна,
Супа çутă çутăлнă,
Йĕри тавра касăннă,
Шурă çўç-çуђ йараннă.
Кĕпи хĕрлĕ хăмаđă,
Йĕмĕ йĕрĕн кăваклă,
Ик уринђе атăсем,
Пўрнисенђе çĕрĕсем.
Пиçиххийĕ пилĕкне
Икĕ хутăн йавăнна,
Шереписем кĕлте пек
Айаккине çакăннă.
Карттусĕйĕн умĕне
Кăтрашкапа йусанă,
Тавра ђăпар симĕслĕ,
Кантăр шăмми çыхăннă.
Хĕрĕн пĕвĕ аккăш пек,
Пиђĕ йăмăх хĕвел пек,
Куçĕ кăвак ђеђек пек,

Тути хёрлӗ улма пек,
Ука тӗслӗ ҫӳҫ пуҫӗ,
Ҫӑтар ҫухлӗ кӑкӑрӗ,
Ури кӑмӑл ӗмӗҫӗ—
Ҫут тӗнҫенӗн пурнӑҫӗ.
Хӑлхисенҫе алкасем,
Ал тунинҫе сулӑсем,
Ҫӑнкӑр-ҫӑнкӑр мӑйӑисем
Хӑй ҫутипе ҫунаҫҫӗ.
Кӗрен ҫеҫек ҫанӑсем,
Саппунӗнҫе тӗрӗсем,
Хушписенҫе тиҫмасем
Килшӳлеҫҫӗ йусавне.
Туртса ҫыхнӑ пиҫиххи,
Пусма-пусма шерепи,
Сарса хунӑ саррине
Вӗҫи ҫиневаррине.
Пилӗк пӳрне выҫанаҫ,
Йӗке кусаҫ, ҫип тулаҫ;
Кӗмӗл ҫӗрӗ пӳрнере
Йӑлтӑр йӑлтӑр тӑваҫ-ҫке.
Кӑлтӑртатаҫ, перӗнет
Йӗке куҫӗ урайне,
Шӑхаракан йӗрӗлҫе
Хӗр ҫупасса кӗтет-ҫке.
Хӑми тикӗс пулинҫҫӗ,
Ҫарӑнминҫҫӗ хӗр ӗҫӗ,
Савни ӑслӑ пулинҫҫӗ,
Хӗре каҫҫӑ илинҫҫӗ.
Каҫҫи ҫине пӑхсанах,
Тути куҫӗ йӑл кулаҫ,
Икӗ пиҫӗ сарӑлаҫ,
Йанах айӗ пӑҫ путаҫ.
Каҫҫӑ ӑсӗ выҫанаҫ,

Шухăш кĕрет пăлканаҫ.
Хĕр куҫĕнҫен пăхаҫ те,
Икĕ куҫĕ шараҫ-ҫке

*
* *

Акă пĕтет турашĕл,
Ҫӳпĕк ҫĕвет сарă хĕр,
Турахупĕ кисренет,
Шăлĕсемпе калаҫаҫ.
Ҫӳсе вĕҫне ҫитес ҫук,
Хĕрĕн ĕҫĕ пĕтес ҫук,
Сăввăн йуррăн вĕҫĕ ҫук,
Унпа кăмăл тулас ҫук.
Каҫҫă ҫĕри калтлатаҫ,
Ҫамрăк йунĕ хускалаҫ,
Ӳҫĕ тăрăх выҫапаҫ,
Алли хĕре йавăнаҫ.
Пăш-пăш ҫĕлхи кăмăлпе
Сарҫу пекех ҫемҫетет,
Тутипеле пĕрлешсе
Ырăлăха пĕлтерет,
Ун вĕрийĕ ҫĕрине
Ҫулăмсăрах ҫунтараҫ,
Вăйлă кăкри хĕр ӳтне
Йуратува ҫавăраҫ.

*
* *

Тĕнҫепеле кĕрешме
Етем йăхĕ пухăнаҫ.
Икĕ ҫĕре пĕрлешет,
Ҫапла ĕмĕр пуҫланаҫ.

## Çут пурнăçа тăвасси çинҫен каланă сăмах.

Хĕрлĕ тĕслĕ çутăпа
Çĕре пăхрĕ Октăпĕр:
Хĕрлĕ çарă пухăнса
Вăрçа кайрĕ ирĕкшĕн.
Ултав çине вăл хайар;
Кайрĕ ăна çĕмĕрсе—
Пантăсене çунтарма
Ирĕк паҫĕ хăйсене.
Халăхсене каларĕ:
«Çутă пултăр хаҫ», терĕ;
«Канашсенĕн аллинҫе
Тĕппех, ултав, пĕт», терĕ.
Тĕрĕс тĕнҫе çуралсан
Тăшман йулмасĕ çĕр çине:
Пĕр тăшман та йулмасан—
Пĕтет вара вăрçи те.
Ҫухăнсенĕн аллинҫе
Кайрĕ вара ĕç хута.
Анҫах пупĕ, çуйипе,
Туртса пырат ултава.
— Атăр халĕ, йулташсем,
Калаипе тĕрĕслер:
Çын ĕнсине кышлана
Хура кĕле çавăрар!
Йал ҫухăнĕ тин вара
Хуларипе пĕрлешĕ;
Икĕ вăйа пухăнса
Тĕттĕмлĕхе пĕтерĕ.
Çавăн ҫухне тĕнҫере
Хуçа пулса тăрăпăр;
Çĕнĕ вăйпа, ерттелпе,
Çутă пурнăç тăвăпăр.

1924 ç.

# Емĕт.

Халăхан ĕмĕҫĕ
Куллен кун ҫывхарать,
Савăнăҫ ĕмĕрĕ
Инҫе мар курăнать.

Пăх-ха, вăл, ҫуралса,
Ҫитĕне пуҫланă,
Хĕвел пек хăпарса,
Тĕнҫене сарăлнă.

Сарăлнă вăйĕпе
Ирĕклĕх ҫитĕнет,
Ҫулҫăсем сăрнă пек
Тĕнҫене витĕнет.

Ĕмĕрхи айхăран
Етем пăх вăранать,
Ĕмĕтне шырама
Вырăнтан тапранать.

Хĕвел тĕс перĕнсе
Ҫĕр айне витнĕ пек,
Ĕмĕтĕн ĕҫĕнҫе
Ҫырла пек пиҫĕнет.

Аҫасем пухăнса
Ҫырлана кайнă пек,
Ĕмĕтĕн вăйĕпе
Ҫут тĕнҫе ҫавăрать.

Халăхăн ĕмĕҫĕ
Куллен кун ҫывхарать,
Савăнăҫ ĕмĕрĕ
Инҫе мар курăнать.

3/XI-24 ҫ.

# Комуниса.

Ҫутӑ пурнӑҫшӑн
Вӑйна хунӑшӑн
Ҫутта кайнӑшӑн,
Йулташӑм, телей!

Ушкӑна кӗрсе
Ӗҫлеме тухрӑн,
Пур вӑйна хурса—
Есӗ тӑрӑшрӑн.

Пурӑнӑҫ кунӗ
Илемлӗ курнаҫ,
Тӗрӗслӗх ҫулӗ
Тӗнҫене тухаҫ.

Ҫеҫек пек шӑтаҫ
Пулӑшу сана,
Ҫӳле хӑпараҫ,
Ҫеҫкене лараҫ.

Вӗсене курса,
Вӗҫессӗм килет,
Ыр шӑршӑ пухса,
Сывлассӑм килет.

Пур тӗнҫе пӑхаҫ
Йусавлӑ куҫпа,
Пур сынна йӑхраҫ
Савӑнӑҫ курма.

Ҫутӑ пурнӑҫшӑн
Вӑйна хунӑшӑн
Ҫутта кайнӑшӑн,
Тантӑшӑм, телей!

# Укерђёк.

Уттавпала кёрешме—
Ёмёрсене еп ыйтрăм,
Тёрёс тёнђе çавăрма—
Пысăк ушкăн еп пухрăм.

Тёрёслёхшён ёçлесе—
Пур ёмёрме еп хутăм,
Ђухăнсене шеллесе
Револђутси кăлартăм.

Револђутси тухсассăн—
Аслă çула кăтартрăм,
Пёр хуйхăсăр пурăнăç
Ушкăнпала çавăртăм.

*
* *

Çын тарёпе, йунёпе,
Еп хырăма ÿстермесп,
Мул тенине хапсăнмасп,
Ёçкёпеле анраман,
Ёçлекенпе çапăçман,
Пур тёнђери айăпа
Ёçёмпеле пётереп.

Тёрлё çыру вуласа
Тёнђе халне еп пёлеп,
Малтан мала тăрăшса
Пурăнăçа тÿрлетеп.
Пур ёçлекен халăха
Пур ђёререн йуратап.
Çён йёркепе ёç туса,
Çёр йусавне пухатăп;
Сахал карпун кăларса,
Нумай усă куратăп.

*
* *

Епӗ сире Ӳкерҫӗк,
Пур халӑха вӗренҫӗк,
Ҫӗрӗн сӑнӗ, йусавӗ,
Хӗрлӗ хӗвелӗн вӑййӗ,
Ҫут тӗнҫенӗн ҫут ҫулӗ,
Туратсенӗн тымарӗ,
Шухӑшсенӗн пуҫлӑхӗ,
Ҫурӑмсенӗн пур ӗҫӗ,
Урасенӗн пур ҫӗрӗ,
Йуратувӑн пур ҫӗри,
Пур кӑмӑлӑн ӗмӗҫӗ,
Ҫут тӗнҫенӗн пурнӑҫӗ;
Тасашӑна тасалӑх,
Килшӳшӗне илемлӗх,
Ӗҫлекене мухтавлӑх,
Тӳрӗшӗне тӳрӗлӗх.

*
* *

Ултавпала кӗрешме—
Ӗмӗрсене ыйтатӑп,
Тӗрӗс тӗнҫе ҫавӑрма—
Пысӑк ушкӑн пухатӑп.

1924 ҫ.

# Çулакансем.

Епир пысӑк маттурсем,
Ђӳхӑн ылттӑн улмисем,
Ут çулатпӑр çавапа,
Сухалатпӑр акапа,
Усал вӑйа—ултава—
Пӗтертӗмӗр йунпала,
Тӗрӗс пурнӑç пурӑнма
Çавӑратпӑр çурӑмпа;
Йахӑратпӑр сыввине
Канӑçлӑха, ирӗке,
Çар кайӑк пек, каçпала,
Кӗркуннешӗн йурлама.
Пирӗн хӗрлӗ çут çӑлтӑр
Пирӗн пата анђӗ вӑл:
Пӗр ӗрете тӑратаЃ,
Пысӑк купа илемлет,
Тӗрӗслӗхе пылђӑкран
Вилӗмсӗре кӑлараЃ.
Çаврӑнђӗ вӑл тӑвӑла
Хӑйне хирӗç тӑрана.
Мухтавлӑха ђухӑна,
Вилӗм çулне усала.
Хӗвел пӑхаЃ çутипе,
Тӗрӗс тӗнђе сӑнӗпе,
Вӑрмансене, çырансе
Илемлетет сӑрӗпе;
Хулана та, йалсене,
Ђухӑнсенӗн çулӗсе,
Ирӗклӗнмен тӗлсене
Виттӗр тухаЃ виçипе;
Пур тӗнђене шӑратаЃ—

Пысăк хуран хăпартаŤ.
Кăнтăр çитет, вут пĕтет,
Сивĕ „тамăк“ çухалаŤ,
Çутă пулаŤ, мул вилет—
Ђухăнсенĕн аллинђе.
Пур халăх та вăранаŤ,
Пуçĕпеле силленет.
Улăх шăрши салатаŤ
Ирĕкленнĕ çĕр шыва,
Сĕм вăрманта ларана
Ĕç йеннелле йыхăраŤ.
Мĕн пур савăт, нефŤанки,
Ђукун çулĕ, тинĕсĕ,
Йеропланĕ, урапи,
Сырса йанă çăпати
Хĕнет пысăк хырăма,
Ĕлĕкхине тавăраŤ—
Йун ĕçене кŭптермест,
Вырăн памасŤ çĕр çинђе—
Вилнĕ çынна çавăраŤ,
КĕлтутармасŤ ђартака.
Ђипер таса çавапа
Вĕрентетпĕр пурнăçа,
Çамрăк хытă сасăпа
Йăхăратпăр тĕнђене—
Çуралтăмăр çĕр çине
Хура сăнне йусама:
АŤăр пире йулташа
Аслă хула çавăрма—
Мăлатукпа сурлана
Тупăсенђеп çавăрма.

# Пурнăçăн йарăмĕсем.

Çуркунне пурнăçăн йарăмсем аванрах.—
Ех, йепле вăл таса, илемлĕ курăнать!—
Хĕвел те хăпарать, пур тĕнҫе çутăлать,
Мĕн пурĕ тăрăшать пĕр вĕçсĕр пурăнма.

Çанталăк хĕрелет, выҫанать, ăшăнать,
Пур ĕçĕн килĕшнĕ вăхăҫĕ курăнать,
Çуралнă папка та ĕлкĕрме пуçланать,
Мĕн пурĕ тăрăшать пĕр вĕçсĕр пурăнма.

Шурлăхра, улăхра кайăк хур вĕшĕхет,
Пур çĕрте те кăткă вĕресе тухать ак;
Мĕн пурĕ çутăлăх тĕнҫепе сĕтĕрнет,
Мĕн пурĕ тăрăшать пĕр вĕçсĕр пурăнма.

Ыр шăршă пуçтарнă ҫеҫексем хушшинҫе,
Пур халăх, ирĕкĕн вăйĕпе тытăнса,
Пур вăйран йуратать пур ĕçĕн тымарне,
Мĕн пурĕ тăрăшать пĕр вĕçсĕр пурăнма.

Тискерлĕх кунсемшĕн, çитменлĕх пурнăçшăн
Ҫĕре пĕртте ĕнтĕ ыратмасть, хумханмасть:
Шухăшсем хуйхăсăр, пур çулсем те уçă,
Мĕн пурĕ тăрăшать пĕр вĕçсĕр пурăнма.

Сăнҫăрсем татăлнă пур ĕç халăхĕшĕн,
Çĕр çинҫе туллийех пур кирлĕ йапала,
Пурăнăç тап-таса ирĕклĕх сыннишĕн,
Мĕн пурĕ тăрăшать пĕр вĕçсĕр пурăнма.

Ултавлăх, суйалăх тăрантрĕ пурне те—
Хаҫ ĕнтĕ тытаймăн çерçийе хывăхпа,—
Мĕн пурĕ пĕлеççĕ вăлсенĕн тымарне—
Мĕн пурĕ тăрăшать пĕр вĕçсĕр пурăнма.

Тамăкпа, райпала кăсйана çаратни
Халăха пĕртех те усăлăх кăтартмасҁ.
Çавăнпа кирлĕ мар такмакпа тăрантни—
Мĕн пурĕ тăрăшаҁ пĕр вĕçсĕр пурăнма.

Наркăмăш сăввипе тăранах йурланă,—
Хађ çитрĕ тĕнђере ĕмĕре хĕн курма.
Ĕмĕтсĕр хырăмсем тăраннă, çуралнă!
Мĕн пурĕ тăрăшаҁ пĕр вĕçсĕр пурăнма.

Хирсене курмасăр вырас çук хађ ĕнтĕ—
Йантă тырă-пулла етем йăх суйапа:
Çулăмпа хыпăннă пур тĕнђе йăвăрĕ—
Мĕн пурĕ тăрăшаҁ пĕр вĕçсĕр пурăнма.

Тĕрĕслĕх пур вăйран ултавпа кĕрешрĕ,
Нумайђђен кĕрешрĕ, хăпарђĕ çийеле;
Хађ ĕнтĕ çĕн вăйпа пурăнма пуçланђĕ—
Мĕн пурĕ тăрăшаҁ пĕр вĕçсĕр пурăнма.

Ăстана айăпсăр хупăннă кайăк пек
Кĕрешсен-кĕрешсен, çапăнсан-çапăнсан,
Тĕттĕмрен çуттала хăтăлса тухнă пек,
Мĕн пурĕ тăрăшаҁ пĕр вĕçсĕр пурăнма.

Çуркунне пурнăçăн йарăмсем аванрах—
Ех, йепле вăл таса, илемлĕ курăнаҁ!—
Хĕвел те хăпараҁ, пур тĕнђе çутăлаҁ,
Мĕн пурĕ тăрăшаҁ пĕр вĕçсĕр пурăнма.

# Паттăр.

## Пусламĕш.

Тĕттĕмлĕхĕн тĕнҫине
Тăшман тухса пусмăрлаť.
Хура халăх йунĕпе
Ырлăх курса пурăнаť.
Хура вăрман ăшĕнҫи
Тăранайми кашкăр пек,
Пур халăхăн ҫĕрĕнҫе
Пур ирĕке илнĕскер—
Тарҫисене, ҫитмеппе,
Пĕр пĕрĕнпе вăрҫтарнă.
Сумсăр тарҫă вĕркесе,
Тăшман вутне хыптарнă;
Сумсăр тупă перĕнсе,
Тĕнҫе ҫуннă, шаплатнă;
Шăлă шăлла вĕлерсе,
Хура кĕле ҫавăрнă;
Йун тăкăнса, вĕресе,
Ҫĕрĕн тĕсĕ варланнă;
Хĕвел тухса, хĕрелсе,
Ана пăхса хурланнă.

## І-мĕш пайĕ.

Ирĕксĕрĕн тĕнҫипе
Тĕпĕпелех тўрлетме,
Ҫухăнсенĕн ҫулĕпе,
Паттăр тухнă лашипе.
Пиҫĕ, куҫĕ илемлĕ—
Ирĕксĕрех йуратăн,—
Йĕрп тавра ҫулăмлă—
Тăшман алли тивеймен;

Алли-ури тимӗр пек,
Нимпе ҫапса хуҫайман;
Кăкăр-ҫурăм проҫăлă,
Тупă персе витеймен;
Ҫӗри аҫа ҫулӗ пек,
Тăшмансене хӳтлемен.
Пуҫне ҫӗлӗк тăхăннă,
Умне ҫăлтăр ҫӗленӗ—
Пилӗк пайлă ҫӗр ҫийӗ
Пилӗк вӗҫрен сутăлнă.
Хыҫне ҫакнă пăшалӗ
Сăмах хушсан перӗннӗ,
Ҫӗрӗн тепӗр майӗнҫен
Тăшмансене вӗлернӗ.
Пӗр аллинҫи йалавӗ
Хӗрлӗ вут пек валкăшнă,
Хӗрлӗ ҫарă пуҫтарса,
Тухнă шурра ҫунтарнă.
Тепӗринҫи хурҫă хӗҫ
Каллӗ-маллӗ выҫаннă,
Пӗрре сулса хисепсӗр
Ăнсе кышлан тăкăннă.
Унăн Лаши, тӗнҫене
Тепӗр майне ҫавăран,
Тăшман алне ҫакăнса—
Асап курса тăнăскер,
Пур вăйӗпе ирӗкне
Ун ырлăхшӗн панăскер,
Йурăхлă ҫын шыраса,
Ăташăнса пурнакан,
Хăй йулташне курупах
Ҫăркуҫ ҫине тайăлнă;
Ҫине паттăр ларупах
Вăй-хăватне ҫухланă;

Кайас çулпе кăтартсан,—
Пур вăйĕпе талпăнпă;
Тăшмансене тавăрма
Малтан мала вăркăнпă;
Çунатсăрах çапăнса,
Çӳлтен çӳле хăпарпă;
Пĕрре сиксе çухрăмсем
Курăнмиййех çухалнă;
Пусса сикнĕ тĕлсене
Йун кӳлĕсем кăларнă,
Хĕн кӳренсе таптаса
Вилнĕ сынна çавăрнă.

## II мĕш пайĕ.

— Ђарăн йулташ, çул пĕтрĕ!
Тенĕ лаши Паттăра:
— Тăшмансене пĕтертĕм.
Вăхăт манăн канăçра.
—Ђим-ха, шăллăм, ан васка,—
Паттăр калаҭ лашине.
— Тăшмансемпе çапăçса
Кив тĕнђене ишрĕмĕр,
Пĕр ĕç ĕçлеменнипе—
Çукăн вĕçне çитрĕмĕр;
Çĕнрен пурнăç çавăрма,
Тепĕр ушкăн тапранса,
Сиккипеле каймалла.
Татах Паттăр лашипе
Кайас çулне иксĕтет,
Ирĕклĕхĕн тĕнђине
Тепĕр майран тикĕслет.

Лаши пынă хăвати
Тепĕр тĕрлĕ ĕç пулаҭ:
Ђухăнсенĕн çулĕсем

Ђултап тўсе сарăнаТ;
Тарăп шывсем тăршĕне
Кĕпер хывса хурăнаТ;
Çуклăх кунĕ таптанса,
Пурăлăхĕ çывхараТ;
Тата ђухăн вăранса,—
Паттăр сăнне çаврăнаТ;
Вăй çитнипе, йеррипе,
Пур нушана вăркăтаТ;
Ĕçĕ хĕрнĕ вăхăтра
Пур ырлăха пуçтараТ;
Пур кăмăђпе вĕренсе,
Пур вăйĕпе ĕçлесе,
Хура çĕре йусатаТ,
Йусавлăха кăтартма
Пур çĕре те сарăлаТ;
Пур ĕçлекен йапала
Пур халăха парăнаТ,
Шампасене кўпĕнме
Вырăн йулмасТ çĕр çине.
Паттăр пăхса савăнаТ,
Хĕç-пăшалне пăрахаТ,
Халăхпала ĕç туса—
Вăл пурне те пуйтараТ.

## III мĕш пайĕ.

— Типех вĕçне тухрăмăр!
Тесе лаши йĕкĕлтет;
— Пур ырлăха курмашкăн
Пире Вăхăт çитрĕ, тет.
— Ђим-ха, айван йулташăм,—
Паттăр хирĕç тавăраТ:
— Пур ырлăха курмашкăн—
Ĕçĕн вĕçне тухаймаŋ;

Ҫӗнрен пурнӑҫ пухмашкӑн
Пайтах ӗҫсем тумалла:
Пур выртакан ҫӗрсене
Тӗрлӗ майран ҫӗнетер,
Пур ӳсекен тыр-пулне
Ҫынран ҫӳлӗ ӳстерер;
Пур халӑхӑн йалӗнҗе
Усӑ кӳмен ҫӗрӗсем
Саркаланса ан выртҗӑр,—
Тыр пуссине ҫаврӑнҗӑр;
Ҫӳлтен ӳкен шывӗсе
Ҫырма тӑрӑх йарасмар,
Хирӗсене шӑварма
Канав алтса хӑварар;
Шыв хӗрринҗе пахҗара
Тӗрлӗ ҫимӗҫ ӳстерер,
Вӗлле хурҗӗсемпеле
Пыяне йышлӑ пуҫтарар;
Кӳлӗсене шыв кӳртсе
Тӗрлӗ пулӑ ӳстерер,
Вырӑн хушнӑ тӗлсенҗе
Выљӑх җӗрлӗх ӗрҗетер;
Тӗрлӗ савӑтсемпеле
Тӗрлӗ ӗҫе ӗҫлетер,
Пур ӗҫсенӗн вӑхӑтне
Машшин сасси йанратӑр;
Мул тӑшманне пӗтерме
Тавар улшу салатар,
Кансӗрлӗхе пӗтерме
Електритсӑ туйанар;
Ҫурт ӑшне те, витене
Лампӑ пӑрса хӑварар,
Каҫ пулсассӑн тӗттӗмре
Кӑнтӑрла пек курӑнтӑр;

Инçе çула çӳреме
Ахтомопил туйанар,
Канав тăрăх кимĕпе
Кăвакал пек йухăнар,
Çӳлтен вĕçсе çӳреме
Йеропланçем туйанар;
Пуш вăхăтра йăпанма
Вăй выљама, йе кулма,
Тĕрлĕ кĕвĕ итлеме,
Ăслăлăха вĕренме,
Халăх хушши пĕр пĕрне
Курайманне пĕтерме,
Тата ытти кирлине
Пăха-пăха тӳрлетме—
Пысăк пулат çавăрар;
Ађасене ӳстерме,
Ват ĕмĕре ирттерме—
Тата хăйне çурт тăвар.
Йал варрине сат лартар,
Урлă пирлĕ çул хурар,
Çула тăрăх тенкелсем
Ларта ларта тирпейлер;
Йĕри-тавра ђеђекĕ
Тĕрлĕ тĕспе сарăлтăр,
Тĕрлĕ асăнмаллийĕ
Йăвăç пĕвĕ хăпартăр,
Тĕрлĕ кайăк йуррисем
Йешĕл сатра шăранђђăр,
Тĕрлĕ сăвлă йанрусем
Пур кăмăла тултарђђăр.
Пур тĕнђери халăхра
Ун пек йĕрке сарăлсан—
Епĕ хĕçпе пăшалма
Хуран ăшне вăркăтăп,

Ӗҫлемелли машшинсем
Ун пеккинҫен шăратăп.
Ултав тĕнҫи тин пĕтĕ,
Ман ҫулăм та ҫарăнĕ.
Пĕр хуйхăсăр пурнăҫра
Пурĕ пĕр пек ырлăхра
Етем йăхĕ савăнĕ.

*
* *

Татах Паттăр лашипе
Кайаť тĕнҫе ҫĕмĕрсе;
Татах пынă хăватпа
Пысăк-пысăк ĕҫ пулаť,
Халăхсенĕн пурнăҫĕ
Тĕрлĕ майран йусанаť.
Лаши, вăйран талпăнса,
Малтан-мала вăркăнаť;
Ҫунатсăрах ҫапăнса
Ҫӳлтен ҫӳле хăпараť;
Пĕрре сиксе ҫухрăмсем
Курăнмиййех ҫухалаť,
Пусса сикнĕ тĕлсене
Ҫăл куҫĕсем кăлараť,
Пăкăл-пăкăл вĕресе
Хура халăх шăранаť,
Пур вăййĕпе ĕҫлесе
Пур ырлăха пуҫтараť.

Илим-Гора, 30/IX ҫ.

# ТУМПАЛЛИ

Стр.
1. Ҫуркунне. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 3
2. Йал ҫинҫе . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 4
3. Ҫулахи ҫӗр. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 5
4. Пир ҫапни . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 6
5. Каҫхи ҫумӑр . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 7
6. Ҫӑл. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 8
7. Вӑрманта. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 9
8. Ыраш . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 11
9. Сухаҫ . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 13
10. Ӑслӑлӑх аҫи . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 16
11. Кӗркунне. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 17
12. Асатте. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 18
13. Хӗллехи ир . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 19
14. Ӗмӗр пуҫӗ. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 21
21. Ҫут пурнӑҫ тӑвасси ҫинҫен калана сӑмах . . . . . 24
16. Ӗмӗт. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 25
17. Комуниса. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 26
18. Ӳкерҫӗк . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 27
19. Ҫулакансем . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 29
20. Пурнӑҫӑн йарӑмӗсем . . . . . . . . . . . . . . . 31
21. Патгӑр. . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . . 33

ХАКĔ 35 ПУС.